Тăхти тĕнчи – чăваш чунĕ

Илья Ефимович Ефимов /Тăхти/ 1889 çулхи авăн уйăхĕн 4-мĕшĕнче халĕ Чăваш Республикин Тăвай районне кĕрекен Нӳшкасси /Элпуç/ ялĕнче çуралнă. 1897 çулта Элпуçĕнчи прихут шкулне вĕренме кĕрет, тепĕр çултан хăйсен ялĕнче уçăлнă пуçламăш шкула куçать. 1899-1903 çулсенче пулас çыравçă Сĕве хулинчи мăнастир шкулĕнче, 1903-1908 çулсенче Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарире вĕренет. Кайран 1914 çулччен Тавăтри земство шкулĕнче /халĕ Элĕк районне кĕрет/, тепĕр çул Превозное ялĕнчи училищĕре /Удмурт Республикин Сарапул районне кĕрет/ вĕрентсе пурăнать. 1915 çулта ăна вăрçа илсе каяççĕ. Пĕр хушă Ĕпхӳри тĕн семинарийĕнче ăс пухать, Г.Комиссаровпа пĕрле Чăваш наци ушкăнне йĕркелес ĕçре тăрăшать. 1918-1919 çулсенче Шăхранти /хальхи Канаш хулинчи/ учительсен семинарийĕнчи кăтартуллă шкулта, 1919-1922 çулсенче Мускавра çут ĕç комиссариачĕн инспекторĕнче, 1922-1924 çулсенче ача çурчĕн пуçлăхĕнче ĕçлет. 1924 çулхи чӳк уйăхĕнче çыравçă В.Брюсов ячĕллĕ Литературăпа ӳнер аслă институчĕн студенчĕ пулса тăрать, тепĕр çултан Мускаври Пĕрремĕш патшалăх университечĕн этнологи факультечĕн литература уйрăмне вĕренме куçать, унта 1928 çулччен ăс пухать. Аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн Шупашкара таврăнать, Чăваш тĕп педтехникумĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме пуçлать. Ӳпке чирĕпе аптракансене тепĕр виçĕ çултан инвалида кăлараççĕ. Нумай вăхăт чирлесе пурăннă хыççăн 1938 çулхи нарăсăн 22-мĕшĕнче Шупашкар больницинче вилсе каять.

И.Тăхтин çырас ăсталăхĕ те, пурнăçа ӳкерес мелĕ те пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччен пĕр стильлĕ тата пĕр шайра пулман. Çавăнпа унăн пурнăçĕпе пултарулăхне тапхăрласа пăхни питех те кирлĕ. Çакăн пек тапхăрсене пайлама пулать: 1/ 1905-1918 çулсенчи пултарулăхĕ; 2/ 1919-1924 çулсенчи пултарулăхĕ; 3/ 1925-1930 çулсенчи пултарулăхĕ; 4/ 1931-1937 çулсенчи пултарулăхĕ.

1905-1918 çулсенчи пултарулăхĕ. И.Тăхти пултарулăх ĕçне халăх сăмахлăхĕпе кăсăкланнă май кĕрсе кайнă. 1905 çулта вăл Н.Никольский ыйтнипе тĕрлĕ халапсем /«Пăкачав», «Ялсем мĕнле пуçланса кайнă», «Ыраш пучахĕ мĕншĕн кĕске», «Ят хурса яни»/, йăла-йĕрке çинчен каланисем /«Çын вилсен тăвакан йăла-йĕрке», «Тырă акакан каланă кĕлĕ»/, мифла сăнарсем çинчен /«Арçури мĕнрен пулать»", «Хĕртсурт»/ пухать. 1906 çулта пулас çыравçă семинарире алăпа çырса кăларакан «Шурăм пуç» журнал валли «Мĕн курни, мĕн илтни» ятпа тепĕр виçĕ халап çырса парать. Вĕсемпе усă курса вăл каярах илемлĕ хайлавсем çырать.

1919-1924 çулсенчи пултарулăхĕ. Ку тапхăрта И.Тăхти поэзи енне вăйлăрах сулăнать.

«Çав-çав çĕрте, çав çĕрте» сăввăн /1924/ стилĕ юмахлăхпа халаплăх енне туртăнни унăн ятĕнчех палăрать. Пĕр вариантра вăл «Пуп кушакĕн юмахĕ» ятпа тăрать. Çав хушăрах юмах пек вуланакан «тет» пайĕ хайлав çуринчен те сахалрах. Унта авторхаркамçă «Асамăçа-карчăка, Çветтуй юмăç-вĕрӳçе, Кăтра пупа асăнса» çырнă. Хура халăхăн чăххисем çăмарта тăва пуçласан, ĕнесем пăруланă хыççăн сарă çусем шăратма тытăнсан, çĕнĕ тырра авăртса кĕрпе тусан пуп таврашĕ питех те савăнать тет. Вĕсем ял тăрăх сĕренри пек, уй чӳкĕнчи пек пуçтарса çӳреме тухаççĕ тет. Ун пек чухне чӳк пуçĕлле кĕлĕ сăмахĕсем калаççĕ тет. Хăйсем ыйтнине памасан вара вĕрӳçĕ пек вĕреççĕ-сураççĕ, ылханаççĕ тет. Пупĕ те, юмăçĕ-вĕрӳçи те пĕрех иккен: вĕсем хура халăха улталаса пурăнаççĕ.

Малалли калу кĕтмен-çĕртен палт! çаврăнать. Вуланă май автор-харкамçă хăй те пуп пекех вăрă таврашĕнчен тухнине пĕлетпĕр.

«Çĕнĕ çул» сăвва /1924/ И.Тăхти чăваш сăмахлăхĕнчи кĕлĕ тата пил тексчĕсен стилĕпе калăпланă. Сăвва «Канаш» хаçата ярса панă чухне вăл çапла ăнлантарнă: «Вăл сăвва эпĕ чăвашсем чӳк тунă чух кĕлĕ тунă майлă çыртăм». Кунти автор – «эпĕ» кĕлĕ калакан чӳк пуçĕ пек курăнать, вăл Турăпа куçа-куçăн тăрать, çĕр çине космос ытамĕнчен пăхать. Хайлаври тĕнче – чăвашăн тĕнче курăмĕн, унти шухăшлав-сăнар чăвашăн традицилле пурнăçĕнчен илнĕскер. Харкамçă çут çанталăкăн йĕрки аркасран асăрханать, тĕнче тĕрекне çирĕплетме тăрăшать.

1924 çулта И.Тăхти хăй çырнисене Мускавран Шупашкара парса ярать те хурав-хыпар кĕтсе илеймест. Унăн хăш-пĕр ал çырăвне е юри çухатаççĕ, е тиркесе тăкаççĕ.

1925-1930 çулсенчи пултарулăхĕ. Ку тапхăрта И.Тăхти романтикăлла эпикăлăхран калуçăн тăрăхлавĕ-питлевĕ урлă çав тулашри питлеве /вăл тĕрлĕ социаллă сийсенчен кулни пулнă/ шалти питлев енне /кунта чи малтан калуçă хăйĕнчен тăрăхланине палăртмалла/ çавăрса яма пултарнине палăртмалла.

Унпа пĕр харăсах Тăхти калури монтажлăх мелне /уйрăм ӳкерчĕксем кăтартса йĕркеленĕ калăва/ алла илсе пырать. Акă «Çанталăк» калаври /1925/ пĕр вырăн: «Тĕрлемес. Станцă. Юман вăрман. Çуртсем. Ыраш пусси. Чукун çул. Вакунсем. Калла-малла пăравус çӳрет кăшкăрса. Тĕрлемес çил арманĕ авăрать».

Çак стиль енне туртăнни çыравçа сăвăланă калуран монтажлă калу патне илсе çитерет. Поэзире «уссăр сăмах» нумай тесе шухăшлать вăл. Хăйĕн «Элихунне» пичетлесе кăларма май килменни ăна «Чăваш поэтсене» сăвва /ăна автор «Мухтав юрри» тенĕ/ çырма хистет. Пĕр критик ал çыру çине «Çакна çыраканĕн ăс-тăнĕ вырăнтан сикнĕ пулас» тесе палăртнă.

Тăхти «Иптеш» калавра çав вăхăтри çыравçăсен ирĕклĕхĕ хĕсĕннине аван систерет. Пĕри ăна ятласа çапла çыру çырать иккен: «Иптешлер! Эсĕ çыркаланисене хăшне сайра хутра вулакалатăп та тĕлĕнетĕп. Эсĕ те тĕп сакайĕнче тĕнче курмасăр пурăнасшăн. Пурнăç малалла кайнине сисместĕн, чухламастăн. Ял хуçалăхĕ мĕнле майпа çĕнелсе пырать; чухăнсем, ватăсем халĕ пурнăç тумашкăн куллен-кун кĕрешнине эсĕ сисместĕн пулмалла. <...> Чăваш ĕç халăхĕ те хальхи саманара çитĕнсе, ӳссе, çутăлса пынисене ма çырса пымастăн вара эсĕ?»

Чылай чухне калавçă Тăхти ятлă. Çавăнпа та айванрах вулавçă ăна автор хăй тесе шухăшлама пултарнă.

И.Тăхти хăйĕн хайлавĕсенче чăваш тĕнчине, унăн наци характерне кăтартас тĕллеве сюжет-фабула йĕрлессинчен маларах лартать. Ку тĕлĕшрен унăн «Çиçĕм çăмахĕ» калавĕ /1927/ питех те курăмлă. Унти харкамçăсен тĕнчи – вĕренмен чăваш хресченĕн пурнăçĕ-шухăшлавĕ. Вăл çут çанталăк илемне туять, сăмах-çăвартан та, çи-пуçран та тирпейлĕ. Çав хушăрах, хăй тĕнчинчен тухса курманскер, ытти хула-çĕр пирки сахал чухлать. Унăн шухăшлавĕпе – апат таврашĕ вут çулăмĕ çинче кăна пиçме пултарать, электричество тенине вĕсем çунакан вутăн /вăл кăмака вучахĕнче çунать, тĕтĕм-сĕрĕм кăларать, савăт-сапана хăрăмлать/ кăна курма пултараççĕ.

«Матюк аппа» хайлав /1927/ малтанласа 1930 çулта «Калавсемпе сăвăсем» кĕнекере пичетленнĕ, ăна унта «çырса пĕтермен повеç» тесе кăтартнă. Автор хăй хайлав ал çырăвĕнче «повеç пуçламăшĕ» тенĕ.

Çийĕнчех ыйту çуралать: мĕншĕн çырса пĕтереймен? Унăн малалла ĕçлемелли планĕ те пулнă-çке. Çыравçă малтан ăспа йĕркеленĕ плана çырнă чух пăхăнманни /тен, пăхăнма пултарайманни/ «Элихун», «Выçлăх çул» поэмăсене, чылай калава хайланă чух курăнать.

1931-1937 çулсенчи пултарулăхĕ. И.Тăхтишĕн çак тапхăр – чи йывăрри тата асапли. Пĕр енчен – литературăри цензура пăркăчне хытарса çитернĕ, çавна пула ирĕклĕрех çырнă калавĕсене пачах та пичетлеме май килмен. Тепĕр енчен – çыравçăн сывлăхĕ хавшасах пынă.

1936 çулхи кĕркунне И.Тăхтие Тутарстанăн Аксу, Элкей тата ытти районне халăх юрри-сăмахне пухма яраççĕ. Çакăн çинчен вăл В.Толстов-Атнарский патне янă çырăвĕнче /5.12.1936/ çапла пĕлтерет: «Кĕркунне, йĕпе-сапара уйăх тăршшĕ çул çӳресси çăмăлах мар ĕнтĕ чирлĕ çынна. Уна эсир, Валериан Григорьевич, лайăх пĕлетĕр. Чăвашла сăмах пур вара вăл – шăла çыртса-тӳссе çӳрерĕм çав тесе калама юрать пуль ун çинчен. Тепле тӳсрĕм вара. Хам та шухăшлап кайран. Тӳсесех тесен этем пит нумай тӳсме пултарать пуль çав тесе шухăшлатăп...»

Н.Шупуççынни çамрăк чухне вĕрентекен пулса ĕçленĕ тăрăхра çӳресе И.Тăхти нумай сăвă-юрă çырса илет. Çав юрăсенчен пĕрне икĕ чăваш сăвăçĕ, Н.Романов аса илнĕ тăрăх, ыталашсах юрланă иккен. Сăмахĕсем вара мĕн пуласса сиссе юрланăскерсем, Турă пӳрнине палăртаканскерсемех-мĕн:

Хура вăрман çийĕ шап-шур
тĕтре,
Тата мĕн çăвасси юлнă-ши?
Çамрăках пуçăм, айван чунçăм,
Тата мĕн курасси юлнă-ши?

Хура вăрман çийĕ шап-шур
тĕтре,
Шап-шур пулсан та мамăк
мар.
Ăçта çитсессĕн те пĕр хĕвел,
Çакă çутă тĕнче тамăк мар.

Хура вăрман çийĕ пит тикĕс,
Кăçал акса тунă кантăр пек.
Уйрăлатпăр, тăван, уйрăлатпăр
Кантăр çинчен пуса татнă пек.

Кĕçех Н.Шупуççыннине арестлеççĕ, И.Тăхти юлашки кунĕсене пурăнса ирттерет. Çĕре кĕриччен уйăх маларах, «Сунталăн» 9-мĕш номерне аллине илсе, хăй çинчен çырнине вуласан, çыравçă мĕн шухăшланине эпир нихăçан та пĕлеймĕпĕр ĕнтĕ. НКВД следовачĕлĕсен хучĕсене тĕпе хурса çырнă статьяра /«Халăх тăшманĕсене тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа çĕмĕрсе тăкар»/ И.Тăхти çинчен çапла çырнă пулнă: «Тилĕ пек чеескер, кушак пек йăпăлтискер, вăл «Шерхулла» калавсен кĕнекинче ĕлĕкхи чăваш ялне совет вăхăтĕнчи чăваш ялĕ туса кăтартать. «Нянине, паппине» «поэминче» фашистсем килесси çинчен тĕлленет, тăшман чĕлхипе чăваш халăхĕ çинчен, унăн çыруçисем çинчен тӳсме çук мăшкăлла чĕлхепе çырать...»

Çапларах лару-тăрура çĕре кĕнĕ И.Тăхти.

Виталий РОДИОНОВ, профессор